

# ХĔРАРĂМ ТĔНЧЕ ТЫТАТЬ



Проект авторĕ – Светлана Чикмякова. сайт: putpobedy.ru

## Хастар ĕçчен, телейлĕ амăшĕ

**Хăшпĕр хĕрарăмсен çăлкуç пек тапса тăракан хастарлăхĕнчен уйрăмах тĕлĕнмеллипех тĕлĕнетĕн. Карьерăра çитĕнӳллĕ вĕсем, обществăлла ĕçре – ыттисене ертсе пыракансем, спортра малтисен ретĕнче. Çав вăхăтрах çемье «вучахĕн» ăшшине сӳнме памасăр упраççĕ, ачи-пăчин ырлăхĕшĕн канăçа пĕлмесĕр ăшталанаççĕ...**



Çак çĕкленӳллĕ сăмахсем, пĕр ӳстерсе каламасăрах, Вăрнарти Вера Генриховна Васильевана та тӳреммĕн пырса тивеççĕ. Ĕçĕсемпе-ӳсĕмĕсемпе тивĕçлипе палăрнă район пурнăçĕн активисчĕсенчен пĕри вăл. 21 çул (вĕсенчен 10 çул ытла директор заместителĕнче) районти тĕп библиотекăра тăрăшнă вăл, Хĕрарăмсен районти канашне ертсе пынă май социаллă чи çивĕч ыйтусене татса пама активлă хутшăннă.

Халĕ Вера Генриховна виççĕмĕш çул ĕнтĕ Вăрнарти хутăш препаратсен заводĕнче библиотекăпа музей методистĕнче тимлет. Профессионализма мала хума хăнăхнă специалист çĕнĕ коллективра та кĕске вăхăтрах ырă ят çĕнсе илнĕ. Завод ĕçченĕсене вулавпа кăсăклантарас, библиотека фондне пуянлатас тесе пысăк ĕç пурнăçлама пултарнă. Кăçалхи августра, акă, ун сĕнĕвĕпе завод библиотеки валли 150 пин тенкĕлĕх 600 енне кĕнеке туяннă. Çĕнĕ изданисем хушшинче – классика хайлавĕсем, детективсемпе çăмăл романсем, паянхи авторсен произведенийĕсем.

– Библиотекăн вулавçисен тĕп йышĕ – предприяти работникĕсем. Арçынсем историлле романсене килĕштерни сисĕнет. Хĕрарăмсем илемлĕ литература, юрату çинчен, чун-чĕрене хускатакан кĕнекесем вуласшăн. Наукăпа производство центрĕнче тимлекенсене, акă, хими енĕпе техника литератури кăсăклантарать. Хаçат-журналăн çĕнĕ кăларăмĕсем уйрăмăнах килнĕ-килмен саланаççĕ.

Поселок çыннисем, ытларах аслă çулсенчисем, ытларах ачасем нумаййăн çӳреççĕ завод библиотекине. Ĕçтешсем ывăлĕхĕрĕсем валли тăтăшах кĕнекесем илсе каяççĕ – шкул программинчи хайлавсене пурне те тупма пулать кунта, – юратнă ĕçĕ пирки хавхаланса каласа кăтартать Вера Генриховна. Каламалла, хăй те кĕнекесĕр пурăнаймасть вăл. Шкул саккинченех истори предметне кăмăлланăскерĕн халĕ те чунĕ авалхăха сăнлакан кĕнекесем патнех туртăнать.

Çапах пĕр кĕнеке уншăн юлашки вăхăтра чи çывăххи, алăран кайманни пулса тăнă. Вăл – «Вурнарский химический» ятлă кăларăм. Вера Васильева музей методисчĕ те-çке: экскурсисем иртерме хатĕрленсе предприяти историне шăпах çак кĕнеке тăрăх тарăннăн шĕкĕлченĕмĕн. Паллах, заводăн ветеранĕсемпе курса калаçни, вĕсен асаилĕвĕсем те районта çеç мар, чăваш çĕрĕ çинче пĕтĕмĕшле химии промышленноçĕ мĕнле «çуралса» аталаннине ăнланма пулăшнă. Çавăнпа ĕнтĕ Вера Генриховна йĕркелекен экскурсисем пуриншĕн те çав тери интереслĕ. Кăçал юсавра çĕнелнĕ, экспонатсемпе пуянланнă музейра хамăр районти кăна мар, кӳршĕри Йĕпреç тăрăхĕнчи вĕренекенсем, Чăваш патшалăх университечĕн студенчĕсем хаваспах пулса курнă. Тата тепĕр ырă йăла çирĕпленнĕ заводра – пĕрремĕш хут ĕçе кĕрекенсем управление е цеха мар, шăпах чи малтан музея çул тытаççĕ.

– Хам эпĕ социаллă тивĕçтерӳсен управленийĕн пуçлăхĕ Евгений Анатольевич Захаров иртерекен экскурсисенчен пĕринчен те юлмастăп. Вăл историпе хавхаланса паллаштарни пурне те тыткăнлать: заводăн пĕр-пĕр ĕç тапхăрне каялла таврăннăн туйăнать, çав самант чăн пек куç умне тухать. Унран эпĕ хамăн ĕçре питĕ нумай вĕренетĕп, – палăртать пултаруллă методист.

Чунри хавалпа тăрăшакан çын пур ĕçре хастар. Çавăнпах наградисем тивĕçлĕ. Вера Генриховна пултарулăх ăнтăлăвĕшĕн хăй вăхăтĕнче Чăваш ен Президенчĕн стипендиачĕ пулнă, ЧР Культура министерствин Хисеп грамотипе, ытти шайри наградăсемпе чысланă ăна.

– Мана 2012–2017 çулсенче районти Хĕрарăмсен канашне ертсе пыма шанчĕç. Чылай кирлĕ ĕç пурнăçларăмăр çак тапхăрта. Ашшĕсен канашне пуçласа йĕркелерĕмĕр. Ăнăçсăр тата йывăр лару-тăрури çемьесене пулăшассипе, вĕсен çивĕч ыйтăвĕсене татса парассипе тĕллевлĕ тимлерĕмĕр. Ырă кăмăллăх акцийĕсем, тĕрлĕрен мероприятисем – пĕтĕмпех хамăр шутран е спонсорсене шыраса-явăçтарса. Ун чухне пирĕн Канаша тĕрлĕ çулсенче республикăра чи лайăххи, тĕслĕхли тесе йышăннăччĕ, – пĕлтерчĕ Вера Генриховна, çемье, амăшлĕхпе ачалăх ыйтăвĕсем хăйĕншĕн яланах пĕлтерĕшлине çирĕплетсе.

Çывăх пулмасăр, вăл хăй те нумай ачаллă, телейлĕ амăшĕ. Аслă хĕрĕ те Вăрнарти хутăш препаратсен заводĕнче вăй хурать. Вăтам ывăлĕ – тĕп хулари техникум студенчĕ, кĕçĕнни поселокри шкулта пĕлӳ пухать.

Вера Генриховна кану вăхăтне те усăллă иртерме кăмăллать. Илеме курматуйма пĕлет: çак юрату унăн алĕçне хывăнать. Вăл бисерпа хӳхĕм тĕрĕсем шăрçалама ăста. Ачаран тĕвĕленнĕ тепĕр юратăвĕ унăн – спорт. Паян та фитнес, аэробика унăн пурнăçĕнче уйрăм вырăн йышăнаççĕ.

**Ирина ЯКОВЛЕВА.**

## Сывлăх – хаклă пурлăх

**Ыра чунлă, пациентсемпе тараваt, професси тĕлĕшĕнчен ăста тухтăра кашниех хисеплет. Пултаруллă специалист коллективра та ят-сумра. Вăрнар район тĕп больницинче тимлекен Надежда Владимировна Петрова тăрăшуллă ĕçĕпе, ăшă кăмăлĕпе хисеп çĕнсе илнĕ.**



Чăн та, унăн ĕçри яваплăхĕ питĕ пысăк. Вăл диагноз тĕрĕс лартнине пула этемĕн малаллахи сиплевĕ мĕнле пуласси килет. Надежда Владимировна рентгенологра чылай çул ĕçлет, çавăн пекех вăл тĕп врачăн поликлиника уйрăмĕпе тимлекен заместителĕ те. Хăйĕн тивĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлать. Надежда Петрова район тĕп больници çумĕнчи ковидпа кĕрешекен центрти пациентсене те сыватас тесе ырми-канми вăй хурать. Вилĕме куçран пăхакансене çăлса «иккĕмĕш пурнăç» парнелени те темиçе пулнă.

– «Хĕрлĕ зонăри» пациентсем пурте сывалса тухчăр тесе пирĕн коллектив мĕнпур вăйран тăрăшать. Чир-чĕре шала кайиччен тупса палăртнине нимĕн те çитмест. Хаяр амак аташнă чух асăрханулăхпа тимлĕх çинчен манмалла мар. Чир-чĕр паллисем пулсанах пĕр тăхтаса тăмасăр тухтăр патне каймалла е васкавлă медицина пулăшăвĕн ĕçченĕсене чĕнмелле. Унсăрăн рентген ӳкерчĕкĕ тăрăх час-часах ӳпкен пысăк пайĕ сиенленнине тупса палăртма пулать. Паллах, медицина тĕлĕ-шĕнчен чарусем çук-тăк, коронавирусран пурин те прививка тутармалла. Аслă ăрурисем ковидпа йывăртарах чирлеççĕ. Сахăр диабечĕпе, чĕре тата юн тымарĕсемпе аптракансен те вакцинациленмелле. Усал чире парăнтарнисен те палăртнă вăхăт иртнĕ хыççăн прививка тутармалла, тарăн диспансеризаци витĕр тухмалла, сывă пурнăç йĕркине пăхăнмалла, – тет тухтăр.

Надежда Владимировна рентгенологра тăрăшнă май 39 çултан иртнĕ хĕрарăмсен икĕ çулта пĕрре сĕт парĕсене маммографи тĕпчевĕ тутармалли çинчен асилтерет. Патологи улшăнăвĕсене тупса палăртсан этемлĕхĕн черченкĕ çуррин сипленме тивет, çавăнпа та диспансеризаци вăхăтра тухни пĕлтерĕшлĕ.

Надежда Петрова – аслă категориллĕ специалист. Вăл тухтăр профессийĕ çинчен ача чухнех ĕмĕтленнĕ. Çутă ĕмĕте пурнăçа кĕртес тесе И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн медицина факультетне вĕренме кĕнĕ. 1998 çулта алла диплом илнĕ. 2015 çулта квалификацие ӳстернĕ. Атăлçи тĕпчев медицина университетĕнче пĕлĕве тарăнлатнă. Пархатарлă тата тӳрĕ кăмăллă ĕçшĕн тĕрлĕ шайри грамотăсене тивĕçнĕ.

Этеме тăван кил ăшши те кирлĕ. Надежда Владимировна çемьере те телей тупнă. Мăшăрĕпе Петр Яковлевичпа икĕ ачана кун çути парнеленĕ. Хĕрĕ амăшĕн çулĕпе кайнă. Диана тĕп хулара педиатрта тăрăшать. Ашшĕпе амăшĕн ятне çӳлте тытать.

**Елена ПОРФИРЬЕВА.**

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.